39-63

ИВАН МАЛГАЙ

# СЫВЛĂМ



ЧĂВАШГОСИЗДАТ
Шупашкар ◆ 1939

Обязательный
контрольный
экземпляр

Обложка худ. Г. Д. ХАРЛАМПЬЕВА
Заставки А. С. ЧИРКОВА

Редактор С. В. ЭЛЬГЕР
Техн. редактор Ф. Я. ЯКОВЛЕВ
Корректор Г. И. ИВАНОВ

Сдано
в произв. 28|V
1939 г. Подп. к печати
27|VII-1939 г. Печ. лист. 2,5
Печ. знак. 45056 в п. л. Тир. 2000 экз
Формат бумаги 60×92 1/32.
Чувашглав. № 1378
Заказ № 1817
Индекс X-5

Типография № 2 Наркомместпрома
Чувашской АССР, г. Алатырь.





## АТТЕ

Эс пирĕн учитель, эс пирĕн атте.
Çĕршывăн тулли, иксĕлми хăватне
Чĕререн ырласа хам юрланă чухне
Сана тав тăватăп, Сталин аттем.
Эс—халăх хавасĕ, эс—çутă хĕвел.
Эс—пурнăç илемĕ, эс—пирĕн телей.
Сан ятпа боецсем çĕршыва хуралласçĕ,
Сан ятпа пилотсем тӳпере ярăнаççĕ.
Сан ятпа çамрăксем хăть хĕлле, хăть çулла
Ту çинче, сывлăшра, тинĕсре те пулаç.
Санпала ĕççыннийĕн хăвачĕ ӳсет,
Сана ĕççынни чĕререн хисеплет.
Пăтранчăк шыв евĕр пăтраннă кив пурнăç,
Хĕн-хурĕ те пусмăр пĕр вĕçĕмсĕр урнă.
Выçлăх та сивĕ алхаснă ялан,

Чир пынă унчух хулана та яла.
Хаљ иртнĕ çав пурнăç,—хуплаймĕ тек пусмăр,
Телейлĕ çĕршыван хуçи паян хамăр.
Çуралтăм та ÿсрĕм, курмарăм нуша,
Пуян хуçасемшĕн усмарăм пуçа.
Мана çут Октябрь ÿстерчĕ савса,
Мана аслă Сталин ÿстерчĕ пăхса.
Маншăн юрлаççĕ чипер кайăксем,
Маншăн çурăлаççĕ чипер чечексем.
Маншăн—çак пурнăç, маншăн çул уçă,
Маншăн килет çĕкленсе ирхи шуçăм.
Эпĕ телейлĕ, пурнап савăнса,
Хаваслăх юрри хаљ юхать шăранса.
Хăщ ĕмĕр, хăçан сарлака ирĕкпе
Пире савăнтарнă çапла, хальхи пек.
Кунта хаљ, кунта кашни çыншăн телей,
Кунта кашни çыншăн çунать çут хĕвел.
Ачашшăн лăпкать ăшă çилĕ пире,
Савса хумхатать вăл колхозлă хире.
Пуриншĕн те чаплăн курнать çут хĕвел,
Пуриншĕн те Сталин—чи хаклă телей.
Вăл пирĕн учитель, вăл пирĕн атте,
Ялав пек çĕклетпĕр хаљ унăн ятне.
Юрлаççĕ ăна ырласа халăхсем,
Мухтаççĕ ăна ман çĕршыв çыннисем.
Сталин, эпир яланах санпала—
Пыратпăр хăюллăн утса малалла.

1938 ç.

## ПИРĔН ГЕРОЙ

*(Совет Союзĕн геройне—Винокурова)*

Эс ӳсрĕн тăван Шупашкар чĕрçинче.
Эс ӳсрĕн телейлĕ Совет çĕрĕнче.
Эс утă та çулнă янкăр ирсенче,
Ялан пирĕнпе эс, герой Винокуров.

Эс курнă çут Атăл юхса выртнине:
Ун çийĕн чарлан явăнса вĕçнине,
Ун урлă паром ир те каç каçнине
Эс курнă, сăнанă, герой Винокуров.

Эс çитĕнтĕн паттăр, эс кайрăн çара
Тăван çĕршыва тăшманран сыхлама,
Эс çапăçрăн хыттăн инçе Хасанра,
Кăтартрăн вăйна эс, герой Винокуров.

Тăшман тăхлан пуля кĕртсе сан ăшна,
Тăшман çивчĕ хĕçĕ лартса сан пуçна.

Тăшман тăрăшсан та татма кунçулна,
Çавах парăнмарăн, герой Винокуров.

Сана çапăçу вутĕнче вăй парса,
Санăн чĕрери кăмăлна хăпартса,
Сана Сталин пычĕ çулна кăтартса:
Хăюллăн кĕрешрĕн, герой Винокуров.

Эс çапăçрăн вирлĕн çĕршыв ячĕпе,
Çулпуçăмăр Сталин атте ячĕпе,
Хĕвелĕмĕр—Сталин ялавĕпеле
Тăшмана эс çĕнтертĕн, герой Винокуров.

Никам та курман-ха кун пек çĕршыва:
Ăçта чечексем халь хитрен çуралаç,
Ăçти кĕтесре пурнăç анлăн шăвать,
Кунта çеç куратпăр ăна, Винокуров,—

Кунта çеç, кунта сывлăш уçă, таса,
Кунта çĕршыва чĕререн мухтаса,
Ĕççынĕ юрлать пурнăçа юратса,
Кунта эпир хамăр хуçа, Винокуров.

Пире аслă Сталин пăхса ӳстерет,
Пире аслă Сталин çĕнме вĕрентет,
Хăюллă çынсем кăларать пирĕнтен:
Хутшăнайччăр сан пек геройсем, Винокуров.

Эс ӳсрĕн тăван Шупашкар чĕрçинче.
Эс ӳсрĕн телейлĕ Совет çĕрĕнче.
Эс утă та çулнă янкăр ирсенче,
Ялан пирĕнпе эс, герой Винокуров.

1939 ç.



## КĔТЕТПĔР ЭПИР

Никам ҫитейми вырăнсемччĕ тин ҫеҫ.
Инҫе пулса ҫулĕ, питех те инҫе.
Хăюлла та паттăр Совет хĕрĕсем
Хăюллăн килеҫ тайгана ҫĕнтерсе.
Эпир вĕсене ирĕн-каҫăн кĕтетпĕр,
Эпир вĕсене Мускава ҫитеретпĕр.
Кĕтет вĕсене ыр сунса пирĕн Сталин.
Вĕсен чĕринче—хаклăран хаклă Сталин,
Вĕсен чĕринче—аслă халăх саламĕ,
Вĕсен чĕринче—аслă Сталин саламĕ.
Инҫе пулса ҫулĕ, питех те инҫе:
Мускав хулинчен ҫак Инҫет-тухăҫне,
Вĕсем вĕҫсе ҫитрĕҫ шутланă тĕле—
Ниҫта чарăнмасăр тулли ĕмĕтпе.

Миҫе вăрман урлă, миҫе сăрт ҫинчен,
Мĕн чухлĕ шыв урлă, колхоз хирсенчен
Вĕсем вĕҫсе иртрĕҫ—Совет хĕрĕсем,
Нимрен шикленмесĕр пин-пин ҫухрăмсем.

Çӳлте, çӳлте пычĕ вĕçсе самолечĕ—
Чи çирĕп те аслă çĕршывăн хăлачĕ,
Хаяр каççемпе тĕтререн хăрамарĕ,
Хаяр каççемпе тĕтрене парăнмарĕ.
Хăй илнĕ ĕçе пурнăçларĕ хăюллăн—
Хăть пулнă пулсан та пит йăвăр ун çулĕ.
Миçе вăрман урлă, миçе сăрт çинчен
Хăлат вĕçсе пычĕ Совет çĕрĕнче.
„Родина"—пирĕн телей те çунат,
Пиртен кашнин куçĕ ăна халь сăнать.

Кам курнă хальччен, кам телейлĕ кун пек,
Хăш çĕршыв савăнать хăй хĕрарăмĕпе?
Хăш çĕршыв хĕрĕсем çунатланнă вĕçме?
Хăш çĕршыв хĕрĕсем пурнăçлаç ĕмĕтне?
Кунта вăл, хĕрарăм, арçынĕ - телейлĕ,
Кунта хĕмленет çутă пурнăç хĕвелĕ.
Куллен паттăрсем ӳстерет çак çут пурнăç.
Кун пек çĕршыва халь ăçта камсем курнă?
Салам—пирĕнтен! Пысăк тав пиртен илĕр,
Хисеплĕ хĕрсем! Эсир чаплăх илтĕр.

1938 ç.



## ПИРӖН ДЖАМБУЛ

Тулли пурнăçпа вăй-хăват тулнă чух
Эпир юрламасăр тăма чăтас çук.
Çӗршывăм телейлӗ, çанталăк хӗвеллӗ,
Ăçта мӗн пурне витӗрех курать куç.

Илтетпӗр эпир кайăксен юррине,
Шăпчăксенӗн юрри хăпартать чӗрене.
Унтан та ытла пирӗн пур чаплă юрăç,
Ун çулӗ ӗнтӗ тăхăрвун иккӗре.

Çуркунне йăлтăрать-и, е сивӗ хӗлле—
Вăл çапах пурнăçа хӗмленсе кӗвӗлет.
Ун паттăр кăкрийӗ çакайнă çут орден,
Алă тытнă ăна Аслă Сталин—Хӗвел.

Салам пирӗнтен, хаклă юрăç Джамбул,
Тата темиçе çул хушши сывă пул!
Сан юрру-кӗввӳпе ӗççынни хавхалантăр,—
Сан умра яланах ӗмӗр кӗтнӗ мăн çул.

Çеçен хир тăршшипе сассу кайтăр инçе.
Комбайн çинче, хурçă кайăк çинче
Юрру сан шăрантăр хаваслăн, хăюллăн
Кĕрлесе шыв пек юхтăр Совет çĕрĕнче.

Эпир, çамрăксем, хисеплетпĕр сана,
Эпир, çамрăксем, вĕренетпĕр санран.
Сана нумай çул пурăнма ыр сунатпăр,
Юрла юратса çĕршыва, Сталина.

1938 ç.



## СЫВЛĂХ СУНАТПĂР

*(Н. И. Шелеби поэта орден панă ятпа)*

Кунсем ĕлĕк иртнĕ сана чыс тумасăр,
Тулли пурнăçпа пурăнма çул памасăр.
Сăвву-юррусем сан шăраннă çапах
Кăвар чĕрӳнтен тухакан сассупа.

Эс курнă патшанăн тискер пусмăрне,
Сан ирĕк пулман савăнма, вĕренме.
Хĕвел çутипе савăнса килленмесĕр,
Ачалăх сан иртнĕ хисепсĕр, тивлетсĕр.

Анчах çухалман сан ăшри ĕмĕтсем.
Октябрь хĕвелĕ тухсан хĕмленсе,
Çĕршыв ĕмĕрхи пусмăртан ирĕкленчĕ,
Юрру сан, ялав пек, хăватлăн çĕкленчĕ.

Нумай эс хĕлхемлĕ çĕн юрă шăратрăн,
Сана пирĕн халăх чыс турĕ, юратрĕ.
Сана хисеплерĕ çулпуçĕ—атте,
Çĕклерĕ вăл пирĕн тулли ĕмĕте.

Сана, Шелеби, орден илнĕ ятпа,
Çулпуç халаллана сӳнми хăватпа
Ялан хӳхĕм юрă çырмашкăн чĕнетпĕр,
Джамбул кунçулне çитме сывлăх сĕнетпĕр.

Юрла, пирĕн шăпчăк, шăрат чаплă юрă.
Сана пусмăрта тытас çук пурнăç урăх.
Юрру çĕршыв тăрăх салантăр ялан,
Ялан çĕнтерӳллĕн янратăр ян-ян.

Телейлĕ, хаваслă çĕн пурнăç çинчен
Пĕр вĕçĕмсĕр юхчăр сăвву-юррусем.
Ялан тăшманпа кĕрешмешкĕн чĕнсе,
Ĕçчен халăха çĕклентерччĕр вĕсем.

1939 ç.



## ÇĔНĔ ÇУЛ ЯЧĔПЕ

Каллех, атьсем, паян эпир çĕн çулăн куркине
Çӳле çĕклетпĕр савăнса, юрлатпăр юррине.
Паян çĕн ĕмĕт, çĕн хавас кашнийĕн чĕринче,
Çĕн çул юрри ян-ян юхать Советăн çĕрĕнче.
Пирĕн кунсем тулăхланса пыраççĕ çулсерен,
Хĕн-хур та мăшкăл кутамкки тек усаймасть пире,—
Пĕр çул иртсе тепри килет, хавхаланать чĕре:
Мĕншĕн тесен чи телейли эпир вăл тĕнчере.
Йăл-йăлкăшан хĕвел çути кашнин пӳртнех кĕрет,
Ачашланса кулса тăрать пуриншĕн те пĕрех.
Кам чунĕ савăнмĕ паян çĕн çулăн ячĕпе?
Кам чунĕ савăнмĕ паян çĕршыв хăвачĕпе?
Салам, çĕн çулăм, пирĕнтен тулли салам сана!
Мĕнпур ĕçхалăх сан ятна хисеплĕн асăнать.
Тĕрĕс-тĕкел, туллин пурнар, каллех эпир, каллех
Çĕн ӳсĕмсем, çĕн ӳсĕмсем татах та илмелле.
Чечек пек çамрăк ачаран мучи патне çитех

Кăçал та сывă пурăнччăр, иртнĕ çулхи пекех.
Хитре ўсевçĕ йăвăçсен сип-симĕс çулçисем
Кăçал татах паркан тухса ларайччăр силленсе.
Çўл тўпери çут çăлтăрсем,—хĕрсен
кусĕсем пек,
Нихçанхинчен çуттăн çунса астарччăр яшсене.
Е колхозра, е хулара—пĕр юрату çунать,
Е колхозра, е хулара—хавас çĕклет чуна.
Хуркайăксем кăçал каллех килеççĕ çуркунне,
Кикаклатса вĕçсе иртеç çўлтен те йĕркерен.
Пирĕн маттур самолетсем иртеççĕ вĕсенчен,
Çулне хываççĕ, нумай чух,—кайăксенчен инçе.
Сталин атте ăш кусĕпе пăхса ўстернĕ
паттăрсем
Татах хăпарччăр çўлелле, çул тытчăр инçене.
Никам курман, никам илтмен хăватпа
çĕнтерсе,
Сывлăш çинчи паттăрлăха кăтартчăр тĕнчене.
Салам, çĕн çулăм, пирĕнтен тулли салам сана!
Мĕнпур ĕççынĕ сан ятна хисеплĕн асăнать.
Тĕрĕс-тĕкел, туллин пурнар, каллех эпир,
каллех
Çĕн ўсĕмсем, çĕнтерўсем татах та илмелле.

1938 ç.



## ЭПИР ХАТĔРЕХ

Аттесĕр эп ӳснĕ, хĕн курнă нумай.
Пĕр кун сиктермесĕр асап тӳснĕ май—
Çирен хывăнмарĕ унчух кив сăкман,
Пуçа ăшă çĕлĕк лармастчĕ нихçан.
Пулса эп ялта та, пулса хулара,
Аки-сухине хамах турăм уйра.
Телей тĕл пулмарĕ ниçта та мана,
Телейлĕх çинчен шухăшлаттăм кăна.
Нумай эпĕ ларнă унчух хуйхăрса,
Нумай куççуль анчĕ пит тăрăх юхса.
Анчах ыр курмарăм çавах çĕр çинче
Октябрь хĕвелĕ çунса тухиччен.
Çут шуçăм ытла та хитрен кăвакарчĕ,
Хĕвелĕ тата хитререххĕн хăпарчĕ:
Вăл пулчĕ çĕршыв пусмăртан хăтăлни,
Мĕнпур ĕççынни пусмăра çĕнтерни.
Октябрь ялавĕ çĕкленчĕ унчух,—
Хăватлă та чаплă вунçиччĕмĕш çул.
Çĕршыв улшăнтарчĕ çав çул ĕмрине,
Çав çул улшăнтарчĕ çĕршыв юррине.
Кашни çын чунне çĕклентерчĕ хĕвел,
Кашни çыншăнах халь пĕр пек-çке телей.

Уйсем, вӑрмансем аслӑланчӗҫ ҫав ҫул,
Хӑватлӑ та чаплӑ вунҫиччӗмӗш ҫул.
Ҫав ҫул юр юрларӑм эп хам пуҫласа,
Тӑван ҫӗршыва чӗререн ырласа;
Ун тарӑн, таса, сарлака кӳллисем
Ҫуталчӗҫ умра илемне ҫӗклесе.
Эп хам пуҫласа кайӑксен юррине
Тӑванлӑн итлерӗм тулли кӑмӑлпа.
Вӗсем те унчух, туйнӑ пек ирӗке,
Мана тӗлӗнтерчӗҫ хӑйсен юррипе.
Эп хам савӑнса ҫаранри чечеке
Татса умма лартрӑм ҫӗршыв ячӗпе.
Октябрь ялавӗ ҫӳле те ҫӳле,
Телейлӗх сӗнсе, тек ҫӗкленчӗ куллен.
Ӑна пӗтӗм халӑх аллийӗ тытса,
Хӑюллӑн та чаплӑн пырать халь йӑтса.
Ҫӗр ҫитмӗл мӗльюн алӑра вӗлкӗшсе
Пырать вӑл, тискер тӑшмана ҫӗнтерсе.
Ҫӗклен ҫӳлерех, пирӗн хӗрлӗ ялав,
Эс ҫӗнетрӗн йӑлтах хулана та яла.
Совет ҫӗрӗнче эс ҫитмен вырӑн ҫук,
Эс пирӗн алра—ҫирӗм иккӗмӗш ҫул.
Паттӑрсем ҫурҫӗре те ҫитерчӗҫ сана,
Ҫитерчӗҫ сана паттӑрсем тайгана.
Утатпӑр эпир санпала малалла,
Ҫӗклен ҫӳлерех, пирӗн хӗрлӗ ялав!
Вут пек ҫуттӑн ҫунах, ҫут хӗвел, тӳпере,—
Кӑмӑла хӑпартса ачашлан эс пире.
Аслӑ Ленинпала аслӑ Сталин сана
Ҫутса янӑ пӗрле ӗмӗр-ӗмӗр ҫунма.

Çут хĕвел айĕнче пирĕн чаплă кунсем,
Малалла шăвăнса малалла пынăçем,
Çĕнĕрен çĕнĕ ӳсĕм тумашкăн чĕнеç.
Вăй-хала кăтартатпăр эпир тĕнчене.
Çут хĕвел айĕнче ачасем ман ӳсеç,
Хĕн-хурпа мăшкăла курас çук халь вĕсем.
Саплăк лартнă сăкман пулас çук çийĕмре,
Ăшă çĕлĕк—пуçра. Савăнса эп çӳреп.
Тата тепĕр хут тăшмансем тапăнса,
Ман тăван çĕршывпа çапăçасшăн пулсан,
Эпир, кăтартса пултарулăх вăйне,
Каллех асилтерĕпĕр Хасан кӳллине.
Пирĕн юн вăл—вĕри, пирĕнте вăй-хăват,
Пирĕн чун çĕнтерӳшĕн кăвар пек çунать.
Çĕнтерӳшĕн юрлап эпĕ хам та паян,
Юррăм кайтăр инçе янраса ян та ян.
Пирĕн çывăх атте Кремльте пурăнать,
Пирĕн çывăх атте юрататъ юрăна,
Вăл чĕнсен тăшманпа çапăçмашкăн пире—
Кар тухатпăр вăрçа. Кар тухма хатĕрех!

1938 ç.

## БИЛЕТ

Хуллен шупкалса тул çути килнĕçем
Яла янратса авăтаç автансем.
Шур уйăх ир майĕн тӳлеккĕн çуталчĕ,—
Майпен пĕлĕтре сайралаç çăлтăрсем.

Манра ыйăх çук, эп вулатăп, çырап,
Пите çил вĕрет кантăкран паçăрах.
Чечек куçăмра сарăлать лĕпĕш евĕр,
Манра çĕкленсе вăй-хăват хăпарать.

Паян сăввăма вырăн патăм нумай,
Пуçра шухăшсем капланса килнĕ май.
Мĕнчул çырнăçем çавăнчул ĕмĕт пысăк,
Паян чарма çук ман вĕри чунăма.

Манра вунă çул хĕрлĕ питлĕ билет,
Ăна çĕклесе ман юрлассăм килет.
Вăл пачĕ хисеп, вăл мана этем турĕ,
Манра вирхĕнет вăл тыттарнă тивлет.

Билет—савăнса пурăнмашкăн чĕнет.
Билет—çĕршыва сыхламашкăн чĕнет.

Билет вăл—ман пурнăç, вăл—манăн кунçул,
Билет—çĕнĕрен çĕн сăвă çыр, тет.

Юхсам, манăн юррăм, юхсам çĕкленсе,
Чечеклĕ çĕршывăм—Совет çĕренче.
Мĕнпур таврана, тĕнчене кайса илтĕн,
Юхсам кăнтăртан çурçĕре çитиччен.

Çут шуçăм çутти паян чаплăн çунать.
Аçта кун пек шуçăм кам халĕ тупать?
Пире ӳстерет, çын тăвать аслă Сталин—
Çут шуçăм татах çулăмлатрĕ чуна.

1938 ç.



## АМĂШĔ

Виç ывăлăн амăшĕ ларнă пӳртре.
Ун пичĕ çине хĕвел ӳкнĕ хитрен.
Вăл ларнă пӳртре хӳхĕм сӳс арласа,
Хăй саван юррине сăвăлла юрласа.
Кантăк уçă пулса килкарти еннелле—
Илсе тухнă тула ун юррин кĕввине.
Çамрăк хĕр каччине кĕтнĕ пек, вăл ялан
Тăрса пăхнă час-часах тулалла кантăкран.
Пĕр майăн хуллен кăнтăрла иртнĕрен
Мĕлке вăрăмланнă тулта ерипен.
Вăл ларнă пӳртре хӳхĕм сӳс арласа,
Хăй саван юррине сăвăлла юрласа:
—Çуратрăм виç ывăл, виç ывăл ӳстертĕм,
Пурне те инçе кайăк евĕр вĕçтертĕм.
Ķашни тав тăвать ӳстернишĕн мана,
Ăçтан вĕсене ашшĕ-амăшĕ манать?!
Пĕри Мускавра пурăнать яланах:
„Эп куртăм, тет, аслă çулпуç Сталина“.
Ķăçал инженерăн ятне вăл илет,
Ăна илме унăн чи пысăк тивлет.

Кăçал вăл çитесшĕн курмашкăн киле,
Кăçал январьте хăнана çитмелле.
Килсех-ха тăраççĕ унран çырусем,
Килсех-ха тăраççĕ унран парнесем.
Тепри пурăнать Хĕрлĕ Çар ретĕнче,
Çут орден çиçсе ялкăшать кăкринче.
„Кĕртес çук, тет, эпир тăшмана чикĕрен;
Пирĕн куç, тет, курать таврана витĕрех".
Ялтан вăл кайни тултарса пилĕк çул,
Шăпах ултта кайрĕ кăçал—призыв чух.
Кăçал вăл çитесшĕн курмашкăн киле,
Кăçал январьте хăнана çитмелле.
Манмасть вăл мана та, манмасть аншĕне;
Пире юратса ырлăх-сывлăх сĕнет.
Килсех-ха тăраççĕ унран çырусем,
Килсех-ха тăраççĕ унран парнесем.
Кĕçĕнни пурăнать виçĕ çул Кавказра,
Вăл вĕçет хуларан хулана сывлăшра:
„Питех çӳллĕ, тет вăл, Кавказ тăвĕсем;
Хăй вĕçеп, тет, ялан вĕсенчен те çӳлте".
Ак, халь те умрах ун кăвак куçĕсем,
Умрах халь, умрах ун манми ĕçĕсем.
Ăна асăнаççĕ колхоз хĕрĕсем,
Ун патне çӳретеççĕ ялтан çырусем.
Кăçал январьте вăл килеп, тет, вĕççе.
Килсех-ха тăраççĕ унран парнесем.
Кĕтетпĕр пурне те кăçал январьте.
Кашнишĕн ман чунăм-чĕрем хĕпĕртет.—
Виç ывăлăн амăшĕ ларнă пӳртре.
Ун пичĕ çине хĕвел ӳкнĕ хитрен.

Вăл ларнă пĕччен хӳхĕм сӳс арласа,
Хăй саван юррине савăлла юрласа.
Кашни ывăлне аса илнĕ пĕччен,
Кашни ывăлне мухтаса юрринче.
Çамрăк хĕр каччине кĕтнĕ пек, вăл ялан
Тăрса пăхнă час-час тулалла кантăкран.
Сасартăк пӳрте упăшки кĕрсе тăнă—
Виç ывăлăн ашшĕ. Питех хавасланнă.
Ун çирĕп те ĕçлĕ чипер аллинче
Пулса конвертсем—виç çыру виç енчен.
Вĕсем часах пĕлнĕ: Пĕри Мускавран,
Тепри чикĕрен—Инçетри Тухăçран,
Кĕçĕн ывăлĕ çырнă татах Кавказран.
„Çыртăм, тенĕ, çыру, вĕçнĕ чух сывлăшра".
Кашнин çырунчех салам тупнă вĕсем,
Кашни тав тăваççĕ хаваслăх сĕнсе.
Мĕнпур пускилпе ял-йыша салам çырнă,
Ашшĕпе амăшне ӳстернишĕн ырланă.
Кашни асăнать çырура Сталина,
Кашни тав туса сывлăх суннă ăна.
Кашни çитме пулнă кăçал январьте.
Кашни мухтанать Сталинла ĕмĕрпе.

1938 ç.



## СЫВЛĂМ

Ирхи шурăмпуçĕ
Йăмăх вут хĕлхемлĕн
Паçăрах çĕкленчĕ,
Ерипен килсе.
Паçăрах хăпарчĕ
Çĕр çине хĕвелĕ,
Çĕршыва çутатрĕ,
Çулăм сирпĕтсе.

Симĕс курăк çийĕн
Пахчара çут сывлăм
Йăлтăрса выртатчĕ
Кĕмĕл шăрça пек.
Вашават хĕвелĕ
Пăхнăçем хăюллăн—
Сывлăмĕ пĕр майăн
Типнĕçем типет.

Çак сывлăм куççуль пек
Туйăнчĕ мана,
Халăх куççуль халĕ
Типнĕн туйăнать.

Астăватăп лайăх,
Лайăх асилетĕп,
Тусăмçăм; эс, тусăм,
Хăв та астăван:
Пирĕн те куççуль вĕт
Типрĕ сывлăм евĕр,
Çулăмлă Октябрь
Хĕвелĕ тухсан.
Сывлăм—ирпе ӳкĕ,
Каллех ӳкĕ, тетпĕр,
Халăхăн куççулĕ
Урăх ӳкес çук.

Манăн сăвăсем те
Нумай çуллăх юлĕç,
Ĕмĕр-ĕмĕр пулĕç
Халăх умĕнче.
Виличчен эп хам та
Юрламашкăн тивĕç
Çак илемлĕ, тулăх
Совет çĕрĕнче.

Ма тесен, калатăп:
Çĕршывра халь урăх
Мăшкăл та, хĕн-хур та
Çӳрес çук асса.
Пирĕн пурнăç чапĕ—
Ĕç те кулă, юрă.
Сывлăмлă ире те
Хапăллар савса.

1939 ç.



## ÇAМРĂКЛĂХ CĂВВИ

1

Эй, çамрăклăх, ĕçшĕн те юрăшăн ешĕр!
Ман çамрăклăх çутă, таса хĕвел евĕр.
Пире юрласа ташлани килĕшет,
Пире савăнса пурăнмашкăн тивлет.
Эпир пурнакан çĕрĕн ултăмĕш пайĕ
Мĕнпур тĕнчене çĕнтерӳсемпе паллă.
Кунта чечексем çурăлаççĕ хитрен,
Кунта ӳсекен çамрăксем те хитре.

2

Шур уйăх тухать-и, хĕвелĕ ансассăн,
Кĕрет-и пӳрте вăл хăна пек хавассăн,
Кĕрет те пăхать вăл—тӳрех сăпкана,

Тӳлеккӗн лăпкать ыйăхри ачана.
Ун амăшӗ çамрăк. Ку пӗрӗмӗш ывăл,—
Ӳсет выляса та кулса питӗ сывă.
Паллать ашшӗне – куç илмесӗр пăхса
Кулать, йăл кулать, ним чӗнмесӗр выртса.

3

Паян тӳпере эп паллана хӗр вӗçрӗ,
Кăвак сывлăшра парашют хăех уçрӗ:
Вăл анчӗ, вӗçсе кайăк евӗр, çӗре.
Унпа çунатланчӗ ман çамрăк чӗре.
Ăна эп пӗлетӗп, вăл ӳсрӗ илемлӗ,
Ун пурнăçӗ пулчӗ питех те телейлӗ.
Ăна çӗнӗ пурнăç ӳстерчӗ савса,
Ăна комсомол çитӗнтерчӗ пăхса.

4

Вӗрет çил, вӗрет, хăмăшсем хумханаççӗ,
Унта-кунта çеç кайăксем явăнаççӗ.
Боец хураллать çӗршыва чикӗре,
Пӗр хупмасăр куçне таврана тинкерет.
Тăшман кунталла темӗн пек шăвăнсан та,
Боец кӗртес çук нихăçан пӗр утăм та.
Ку пирӗн çӗршывăн хастарлă каччи,
Çӗршывăн хастарлă саръ хӗрӗн каччи.

5

Питех те нумай тантăшсем манăн халĕ,
Вĕсем кашниех çитĕнеç çирĕп халлă.
Кашнин пултарулăх çиçет чĕринче,
Кашнин телей пысăк Совет çĕрĕнче.
Эй, çамрăклăх, ĕçшĕн те юрăшăн ешĕр!
Ман çамрăклăх çутă, таса хĕвел евĕр.
Пире юрласа ташлани килĕшет,
Пире савăнса пурăнни килĕшет.

1938 ç.



## ПИРĔН МАЙ

Хĕвел шевли
Сиксе вылять çĕр çийĕн,
Вăййи чĕнет
Янравлăн юрлама.
Шавлать паян
Ĕçри çĕршыв чĕрийĕ,
Кĕрлет паян
Илемлĕ Хĕрлĕ Май.

Ăçтан чăтан
Пӳртрен тула тухмасăр?
Мĕн-ма ларан
Халь кантăк умĕнче?
Мĕнле тӳсен
Вăйна виççе пăхмасăр,
Мăн ирĕкри
Çĕн Майăн хумĕнче?

Урам тулли
Иртсе пырать колонна,
Маршне маршлать
Оркестр çеммипе.
Кашнин чĕри
Çунас пек çулăмланнă,
Юрра тăсаç
Лайăхне—
Çĕннине.

Мĕн чухлĕ йыш
Кунта, миçе пин çын-ши?
Тупма та хĕн,—
Кураймăн ун вĕçне!
Ялавĕсем
Çĕкленнĕ кĕрешӳшĕн,
Тупа тăваç
Çĕнтерне
Тивĕçне.

Ăш çил юхать
Атăл çинчи хум евĕр,
Ах, уçă-çке ытла та
Чунăма!
Ялавăмсем,
Сире çӳлех çĕклетпĕр,
Сире çĕклет
Илемлĕ Хĕрлĕ
Май.

Мĕнпур тĕнче,
Мĕнпур тĕнчен ĕç йышĕ,
Сире курса,
Хăпарттăр кăмăлне.
Çитес çĕре
Пĕрле утса çитесшĕн
Кĕрешӳре
Туптатчăр вăй-халне.

Паян лере
Фашист алли хуçа-тăк,
Шур террорĕ
Çӳрет-тĕк ахăрса,
Вĕсем тухсан—
Шеллемĕпĕр пуçа та,
Атакăна
Тухатпăр кар тăрса.

Кунта паян
Çапла юрлать колонна.
Хула та ял
Пĕр кĕвĕ кĕвĕлет.
Ĕçхалăхĕ
Ялавпа хăюлланнă,
Чыслăхĕпе—
Май тытнă хĕвеле.

## АСЛĂ, ТӲРĔ УРАМ...

Аслă, тӳрĕ урам ял вĕçне çитиччен,
Тăваткал пахчасем кашни кил умĕнче.
И, утса та утса килленсе пынăçем,
Мĕлкине пăрахаç урама йăвăççем.

Уйăх тухрĕ шуса ерипен тӳпене,
Ăшă çил вĕрнипе çулçăсем чӳхенеç.
Çамрăксем, уç саспа янратса таврана,
Хут купăс каласа вырмаран таврăнаç.

Вăрăм, аслă урам. Эп çуралнă мăн ял
Çамрăксен юррине ӳкермесĕр тăнлать.
И, утса та утса пынăçем малалла—
Панулмийĕн шăрши кăтăклать кăмăла.

Эп утатăп татах. Сывлăш канлĕ чуна.
Кашни пӳрт ăшĕнче электрицă çунать.
Савăнатăп пăхса хула евĕр яла.
Радио куç умне тăратать Мускава.

Тăп-тăр кӳлĕ хĕрне мĕлке выртрĕ пырса,
Çамрăк каччă лаша шăварать шăхăрса.

Шурă мăнтăр лаша çăмарта пек çавра,—
Пĕтĕмпех çавнашкал лашасем колхозра.

Тăп-тăр кӳлĕ мана ытарми килĕшет,
Тăп-тăр кӳлĕ çинче тулли уйăх ишет.
Пилĕк кантăк тухать ун енне пĕр пӳртрен—
Пирĕн пӳрт ĕнтĕ çак, пароход пек хитре.

Тăрă кӳлĕ мана пайтах курнă хĕрпе,
Эпир утнă нумай çак çыран хĕррипе.
Малтанхи юрату çулăмлатрĕ ăша,
Йĕр хăварчĕ кунта асăнма сăвăça.

Акă çитрĕм киле, уçмалла алăка;
Килкарти ăшĕнче шур хурсем какалаç.
Такĕш уçрĕ яри кантăка шал енчен,
Аллине кăтартса чечексем хушшинчен.

1938 ç.

## ОКТЯБРЬ ТИВЛЕЧĔ

Астăватăп, кивĕччĕ килçурчĕ,
Ишĕлсе ларатчĕ кунсерен.
Хура пурнăç çилĕ хытă урчĕ,
Кунĕн-çĕрĕн пире çĕмĕрсе.

Картана таяннă çĕмрĕк хурăн
Çухăратчĕ кантăк умĕнче.
Анне евĕр вăл та кичем юрă
Тек юрлатчĕ йăвăрлăх çинчен.

Кураймарăм эпĕ çутă сывлăм,
Куççуль çеç эп курнă ун чухне.
„Мĕнле ӳсĕн,--тетчĕ,—савнă ывлăм“,—
Ачашлатчĕ чĕрипе аннем.

Шурă акăш чĕппине манмасть, тет,
Хăй ӳксе вилмесĕр те шыва.
Ман анне те тертленсех пăхатчĕ
Ывăлне, памасăр усрава.

Такăр та вăрăм Октябрĕн çулĕ
Пин-пин çухрăм выртать тăсăлса.
Çак çулпа утатпăр та хăюллăн,
Кашни кун каятпăр малалла.

1937 ç.



## МУЧИ КАЛАТЬ

Утма ҫул выртатчӗ кукӑр-макӑр
Эп ҫуралнӑ килӗн умӗнче.
Ҫав ҫулпа пӗр кун та утаймарӑм
Вӗренме, асаплӑ ҫулсенче.

Кӗр ҫитетчӗ. Вӗл вӗҫсе ӳкетчӗҫ
Сарӑ пурҫӑн евӗр ҫулҫӑсем.
Манӑн вӑхӑт тарҫӑра иртетчӗ,
Пусмӑрпа та хӗнпе кӗрешсе.

Куҫҫуль пек выртатчӗ ҫутӑ сывлӑм...
Вӑл типмешкӗн ӗлкӗрнӗ ҫӗре
Пуянсенӗн ачисем хаваслӑн
Шкулалла чупатчӗҫ ирсерен.

Ӳсрӗ хурӑн, атте лартнӑ хурӑн,
Ӳссе ҫитрӗм эп те майӗпен.
Урӑхла пуҫланчӗ пирӗн юрӑ,
Вӑйне илчӗ ҫӗнӗ кӗвӗпе.

Яр уҫайрӗ алӑка Октябрь:—
Кӗрӗр,—терӗ,—пурте вӗренме!

Çур çитейнĕ,—пуянсемшĕн савнăç,
Тăханайнă çĕмĕрт шупăрне.
Юр ăстийĕ—шăпчăк та юсаннă,
Юсанса юрланă юррине.

Анчах эпир вĕсене курмасăр,
Савăнмасăр юлнă пурпĕрех.
Шурă çĕмĕрт çеçки çурлаймасăр
Типсе ларнăн туйăннă пире.

Килчĕ вăхăт, иртнине хăварчĕ.
Шывсем юхрĕç инçе, пит инçе.
Шуçăм çуттăн çуталса хăпарчĕ,
Хĕвел тухрĕ кулса мал енчен.

Хĕвел тухрĕ, Октябрь хĕвелĕ
Çĕршыва сăн кĕртрĕ илемпе.
Ирĕк илнĕ ĕçхалăх телейлĕ
Ялавне çĕклерĕ пĕлĕте.

Йăлкăшса хаваслăх пўрте кĕчĕ,
Пирĕнпе—пурнăç, аслă çул.
Тăшмана аркатнă вăй тивлечĕ
Нихăçан та урăх сўнес çук.

Пирĕнпе—вут çулăмлă Октябрь,
Аслă Сталин пирĕнпе утать.
Ĕмĕр-ĕмĕр ăна тав тăватпăр,
Пирĕн уншăн çунать вăй-хăват.

Çамрăк мар пулин те харăс эпĕр
Утрăмăр васкавлăн шкул енне.

Халĕ ватă, пурпĕрех пĕлетĕп
Вулама та çырма чиперех.
Кашни кунах пĕлӳсем илетĕп,
Эп саватăп çутă ĕмĕре.

1937 ç.



## ЭП ПЫРАП

Пырап йӗлтӗрпе эп колхоз хирӗ тӑрӑх;
Шур юр йӑлтӑрать, чатӑр пек тӳпе тӑрӑ.
Мӗнпур кӑмӑлпа мухтаса ҫӗршыва,
Пырап ярӑнса, ҫиле хирӗҫ шӑвап.
Юлать мӑшӑр йӗр ман хыҫра, шур юр ҫийӗн;
Питсем хӗрелеҫ ярӑнса пынӑҫемӗн.

Пырап малалла, шӑвӑнать йӗлме йӗлтӗр,
Шурӑ юр пӗрчисем вӗҫкелеҫ вӗлтӗр-вӗлтӗр.
Хапха патӗнчен ак иртсеччӗ тин ҫеҫ,
Телефонлӑ ҫула эп хӑвартӑм инҫе.
Ҫунат ҫӗклесе автансем авӑтни те
Кӑшт ҫеҫ илтӗнет, эп ҫаплах вӗҫтеретӗп.

Пырап ыткӑнса, вирхӗнет вӑйӑм-халӑм.
Кунти вырӑнсем ачаран мана паллӑ:
Кунта пирӗн пулнӑ пӗр ансӑр ана,

Кунта анне йӗрнӗ, ларса йӑрана...
Анчах куҫҫульпе эс ӑҫтан хуйха сирӗн?
Юлатчӗ ҫаплах улшӑнмасӑр вӑл пирӗн.

Пырап хирпеле хам ҫула тытса тӳрӗ,
Мана илӗртет ярӑнма январь ирӗ.
Хире янратса кӑшкӑрассӑм килет,—
Салам! тесе, хыттӑн, таҫта ҫитмелле.
Уй-хир халь колхозӑн, колхоз—эпир хамӑр,
Кунта куҫҫуль ҫук, хӗн-хурлӑх кураймӑр.

Кунта тырӑ-пулӑ ӑнса пулать пирӗн,
Кунта ҫул тӑвать эп ярнан йӗлтӗр йӗрӗ;
Кунта кашни ҫу хурҫӑ трактор кӗрлет,
Сывлӑшра вӗҫекен самолет евӗрлех.
Кунта ман анне, тыр вырма килсен, урӑх
Тырри ҫӳхерен юрлас ҫук кичем юрӑ.

Пырап ярӑнса, пӳртри пек ӑшӑ пулчӗ,
Пуҫӑма тӗрлӗрен шухӑшсем килсе тулчӗҫ.
Уй-хирӗм, уй-хир! эс ҫӗклетӗн чуна...
Питсем ӑшӑпа, хӗвелпе ман ҫунаҫ.
Тӳрех шӑвӑнать урари йӗлме йӗлтӗр,
Шурӑ юр пӗрчисем ак вӗҫеҫ вӗлтӗр-вӗлтӗр.

1939 ҫ.



## ОКТЯБРЬ КАЧЧИ

Нумай кунсем, çулсем иртсен, асилтĕм эп тепре—
Хĕвел кичеммĕн пăхнине пăтранчăк тӳперен.
Асилтĕм: çамрăк каччăсем, питшăллипе сулса,
Тухса каятчĕç салтака—ӳкес пек хурланса.
Măйай шăнкри шăнкăртатса тухатчĕ хапхаран,
Кичемлĕ сасă янтраса тăратчĕ хăлхара.
Хуркайăксем, нимне пĕлмесĕр, карти-карти-пеле
Вĕçсе иртетчĕçĕ çӳлтен ăш кăнтăр еннелле.
„Салтакăн ячĕ сахăр мар, ан хапсăнăр пире",—
Тесе юрлатчĕç куççульпе унчух йĕре-йĕре.
Анчах тепле куççуль тăксан та,—
çăмăлланман шăпа,
Тилхепине туртма лекейнĕ вăраххăн ямшăка.
Пахчасенчи улмуççисен пиçсе тăран
улмийĕсем,

Пěрле улах ларса пурнан сар хěрěсен
кăмăлěсем
Вěсемшěн юлнăн туйăннă ěмěрлěхех яла.
Мěн-ма тесен, шанчăк пулман çитмешкěн
каялла.
Нумай кунсем, çулсем çапла иртейнě унчухне.
Урса тăлпанă пурăнăç яш-çамрăксен чунне,
Паянхи пек телей пулман нихçан урамсенче,
Хитре хěвел шевли çиçмен нихçан
çамрăксенче.
Кăçал Октябрь каччисем, ман çамрăк
шăллăмсем,
Пыма пуçларěç призыва. Çěкленнě чунěсем.
Уяв кунхи çěнě тумсем кашниййěн çиййěнче,
Уяв кунхи хаваслăхсем кашниййěн чěринче.
Вěсем илесшěн чыслă ят, ěмěт кашнин—пěрре:
„Хăть кăнтăрта, хăть çурçěрте пуласчě
чикěре,
Çěршывăма сыхласчě ман пур ирсěр
тăшманран.
Чунăм туртать Хěрлě Çара, вăй-хал вěрет
манра“.
Пěр-пěр чипер хěр савнине кěртет-и
призыва,—
Алне тытса, боец пулма телейлěн ыр сунать.
Амěш кěтет ăшă хыпар—хăй ывăлне шанса,
Яр уçă кантăк умěнче юрлать чăлха çыхса.
Хуллен вěрсе иртен çилпе выляççě йăвăççем,
Вěл-вěл вěççе ўкеç çěре саралнă çулçисем.

Хуллен кĕрнеклĕ каç килет, шур уйăх
хăпарать,
Призывниксем илсе килеççĕ чи ăшă хыпара.
Хыпар çӳрет урампала, килрен киле кĕрет:
Вунвиççĕш кайнă, тет, çара,—вунпилĕк
йĕкĕтрен.
Мĕнпур колхозăн çыннисем пĕр хаваспа
савнаç,
Купăс—тухса урам варне—çĕн кĕвĕсем
вылять.
Кăçал Октябрь каччисем, ман çамрăк
шăллăмсем,
Çапла тухаççĕ призывран. Çĕкленнĕ чунĕсем.
Çара илнĕшĕн савăнса, хисеплĕ Наркома
Сăмах параççĕ чĕререн—çĕршывшăн вăй
хума:
Октябрь илнĕ ирĕке, Октябрь хĕвелне,
Юнпа хĕретнĕ ялава, этемлĕх телейне,
Эпир памастпăр, тăшмана кĕртместпĕр
чикĕрен,—
Саламлă тав, çĕршыв, сана ӳстернĕшĕн пире!

1939 ç.



## АКАРА

1

Паян тухрӑмӑр ирех
Аслӑ кӑмӑллӑ хире.
Ир илемлĕхĕ—пирте...
Эх, чĕремĕм хĕпĕртет.

Кунĕ ҫав тери хитре,
Ҫур кĕрнеклĕхĕ—питре.
Тӑррисем юрлаҫ юрра,
Пысӑк йышлӑха кура.

Ав, хĕвел кулать умрах,
Унӑн тумĕ ылттӑнран.
Ирĕлсе пĕтмен юрсем
Ав, выртаҫҫĕ ирĕлсе.

Кăпка çĕрĕ хуп-хура,
Майĕпен лакать ура.
Таçтанах вызтан лапам,
Вăтăр га кунта лăпах.

Ĕнер тытăннă çакна
Пĕр бригадăпа акма.
Çук, ямастпăр ырана,
Пĕтеретпĕр паянах.

Акă сеялка йĕрлет
Харсăр тракторпа пĕрле.
Сарă тулă сапăнать,
Сапăнать те пытанать.

Çирĕм плуг, хĕрĕх лаша,—
„Савăн", тетĕп юлташа.
Сухалатпăр сухине,
Пĕтĕм уй-хир чӳхенет...

Сӳрелетпĕр сӳрине,
Сӳреленĕ çуррине.
Сӳрисем те—тимĕртен,
Кун пек пулнă-и ĕмĕрте!..

Чăн ударник— ват Тимма.
Ĕçре халь вăл ватă мар.
Вăн каçăртнă сухала,
Тракторпа вĕт сухалать.

Çара пуçăн, ярханах,
Çӳçĕ çилпе арканать;

Пĕркеленнĕ питĕнче
Палли юлнă кив тĕнчен:
Тинкерсе пăхсан, куран—
Кукăр çĕвĕллĕ суран.

Çĕввин йĕрĕ—хĕнлĕ çул,
Пулман ăна пулăшу.
Вăл, кĕтӳçĕ, унчухне
Шăнса пăсăлнă пĕрре.

Вăрăм пушă усăнса
Тек çӳренĕ, мучи, сан.
Кĕрхине çил, сивĕнсе,
Турткаланă çилленсе.

Анчах иртнĕ йалт вĕсем,
Эп сана халь вăй сĕнеп.
Пурăн халь ак савăнса,
Урăх лармăн тăвăнса.

Сана тытмĕ тек асап.
Эс илетĕн халь аса.
Эпир хальхи кунсенче—
Çĕнĕ пурнăç чĕрçинче.

Эй, шăрат, мучи, юрра,
Ĕçлеме ялан юрат!

Эсĕ—курнă пурнăçа,
Эс асаплăх курнă çав.

Хурлас çук халь мучине—
Чыслă ĕçĕн хуçине,
Хыçра çук ун шăйрăксем,
Сухалать вăл пикенсе.

2

Инçе мар ларать вăрман,
Тĕлĕрмест те çывăрмасть;
Кассăн-кассăн çил вĕрсен—
Хумханса илет пĕр си.

Яштак çӳллĕ йăвăçсен
Хумханаççĕ вĕçĕсем.
Симĕсленнĕ вăхăтра,
Ах, хитре вĕсем,—кăтра!

Вăрман урлă пĕлĕтсем
Шăвăнаççĕ илĕртсе.
Шăвăр, шăвăр инçене,
Курăр пĕтĕм тĕнчене.

Кайса килĕр анăçа,
Пĕлĕр тĕрлĕ пурнăçа.
Салам калăр ĕç йышне,
Уçăр чăнлăхăн ăшне.

Кăнтăр—çуттăн йăпатать,
Вăхăт çитрĕ апата.

Вӑрман умӗ тип ҫерем,—
Пухӑнатпӑр пӗр ҫӗре.

„Килӗр!“—терӗ бригадир.
Килчӗ унӑн бригади.
Шӑналӑк карнӑ вырӑна
Такӗш тухрӗ юрӑпа.

Такӗш мар-ҫке—радио
Пӑрса ячӗ Радиван.
Шупашкар концерт парать,
Итлӗр-ха Шупашкара.

Кӗҫ пуҫларӗҫ юрлама,
Сӑвӑ-юрӑ калама.
Ҫӗнӗ юрӑ-кӗвӗсем
Юхтараҫҫӗ-ҫке вӗсем.

Репродуктор умӗнче,
Культповозка ҫумӗнчех,
Пурте ларнӑ апата.
Музык кӗвӗ шӑрататать.

Аш яшки, котлет, уйран
Питӗ тутлӑ-ҫке уйра!
Темиҫен йӑтса килмен,—
Илсе килнӗ ик инке.

Чашкӑра сар ҫу ишет,—
Ак поэзиллӗ сюжет!

Кашни—уйрӑм чашкӑпа,
Ҫиеҫ ҫутӑ кашӑкпа.

Кӑнтӑр—уҫӑ та тӳлек...
Аса илтӗм июле.
Лапа мар-ха,—тип ҫерем.
Хӗвел кӑмӑллӑн ҫӳрет.

Тӑрса пӗтрӗҫ апатран.
Почта ҫитрӗ анатран.
Бригадирӗ—комсомолец:—
„Илтӗм!—терӗ—хам сӑмах".

Хӑй хуллен, ҫӳхен кулать.
Хыттӑнах хаҫат вулать.
Ыттисем, эпир—шӑпах,
Килленетпӗр ӑшӑпа.

Эх, хитре кунти ҫӗршыв:
Мӑн тӳпе—кӑвак чаршав...
Ҫилӗ килчӗ те пире
Ак лӑпкарӗ ерипен.

Кӑнтӑрла ҫапла иртет
Ҫӗнӗ чаплӑ уй-хирте.
Юрӑ, кулӑ пирӗнте,—
Вӑл колхозӑн хирӗнче.
Тырӑ-пулӑшӑн эпир
Кӗрешер-ха, кӗрешер!

Пурнăç аслă çут тĕнчен,
Эпир—унăн çуттинче
Çĕнсе илнĕ телейре
Савăнар та хĕпĕртер!

1937 ç.



## КÇЕНИ

Тĕрлĕ-тĕрлĕ кайăксем
Вăрманта юрлаççĕ,
Вĕсен уçă сассисем
Инçете юхаççĕ.

Кçени, çамрăк хĕрача,—
Пĕр пĕччен, пĕр шиксĕр—
Ак çӳрет чечек пухса,
Шалалла кĕмесĕр.

Унăн килĕ инçе мар,
Инçе мар пурнаççĕ;
Пысăк мар уçланкăра
Пĕлтĕрех вырнаçнă.

Ма тесессĕн, эп сире,
Ачасем, калатăп:
Кçени ашшĕ—леçникре
Пурăнать кунта вăл.

Чипер пынă çĕртенех
Темшĕн тăпах тăчĕ.
Акă курчĕ: пĕр этем
Кӳлĕ хĕрне пычĕ.

Кçени ăслă хĕрача,
Нимĕн тăхтамасăр,
Çав этем енне утса
Кайрĕ хăрамасăр.

Юриех чечек пухса
Çӳренçи пек турĕ.
Хăй çаплах малла пăхса
Кӳлĕ хĕрне çитрĕ.

Палламан этем выртать
Йынăшса, чирленĕн.
Кçени сисрĕ йăпăртах,—
Ку вăл чееленнĕ.

Хăнана, тет, эп каяп,
Инçетри яла, тет,
Икĕ кун та каç кая
Çул çине тухса, тет.

Хырăм выçрĕ ман тесе,
Çимелли вăл ыйтрĕ.
Кçени пухрĕ чечексем,
Пит нумай вăл пухрĕ.

Тĕрлĕ юрă итлесех
Çул çине те тухрĕ.
Кçени, тимлĕн итлесе,
Аслăн ответлерĕ:

—Эп сире, мучи, шеллеп,
Тăхтăр эсир, тăхтăр.
Час киле кайса килеп,
Çимелли тупатпăр.—

Ĕнентерчĕ ют çынна,
Аслă, çамрăк Кçени;
Çывăхри заставăна
Хăй çул тытрĕ—вĕçнĕн.

Çын кĕтет, çаплах кĕтет.
Çимеллишĕн мар вăл.
Кирлине пĕлетĕп, тет,
Юптарса, хĕр урлă.

Анчах Кçени ăслăрах—
Çамрăкскер пулин те:
—Тарас çук, тет, вăр-хурах,
Чикĕрен кĕрсен те.—

Иртеймерĕ вун минут,
Тăххăрăшĕ иртрĕ.
Акă икĕ юланут
Вĕçтерсе те çитрĕ.

Кçени хăй те вĕсемпех,—
Юланутпа вăл та.
Пĕрлех илчĕç боецсем:
Ăслă,—теççĕ,—пултăн.

Ăна лартнă хăйпеле
Ав пĕр комадирĕ.
Çитсе тăчĕç те тӳрех:
Ну-ка, кам эс?—терĕç.

Ют çын тăчĕ, тĕлĕнсе
Кçени çине пăхрĕ.
Тем тăвас пек çиленсе,
Шăлсене хăйрарĕ.

Тытнă çынна заставра
Тĕплĕн тĕрĕслерĕ:
А вăл пулнă чăнахах
Фашистсен шпионĕ.

1939 ç.

## ТАНТĂША

Пĕлетĕп аван эп эс савнă хĕре,
Кăçал хăна турĕ ялта вăл пире.
Колхоз унчухне вырмана тухайманччĕ,
Комбайн унчух тухайманччĕ хире.

Эпир çитнĕ чух вăхăт пулчĕ çĕрле,
Урам хушшинче вăйă-кулă кĕрлет:
Яла янрататчĕ янравлă хуткупăс,
Юрлатчĕ вăлах çамрăксемпе пĕрле.

Сан савнă хĕрне, уйăрса ушкăнран,
Килне амĕш кӳчĕ хисеплĕн чĕнсе.
Вĕсем вăйăраччĕ: ташлатчĕç, юрлатчĕç,
Çĕн юрă юхатчĕ мăн ял хушшинче.

Асил, çывăх тантăш, хăв савнă хĕре...
Вăл кĕчĕ те ăшшăн тав турĕ пире.
Пире саламларĕ вăл курма пынишĕн.
— Каймастăр пуль, терĕ, кунтан кĕçĕрех. —

Ак, халь эсĕ çыртăн çыру ман пата,
Чăнах асилетĕн çав çав вăхăта.
Çартан таврăнсан, авланатăп та, тетĕн,
Ăна чĕререн юратап, тен тата.

Санпа килĕшетĕп, юрат ĕмĕрех,
Çарта чипер пурăн, хаваслăн çӳре.
Пĕлеп: тăшмана кĕртес çук чикĕрен эс.
Пĕлетĕп аван эп эс савнă хĕре.

1938 ç.

## САНШĂН ЭП ÇЫВĂХ ПУЛСАССĂН ЯЛАН...

Саншăн эп çывăх пулсассăн ялан,
Саншăн ман сăвă çывăх пулсассăн,
Çыр пĕр çыру хăть, çырччĕ салам,—
Эп чунăмпа ăна вулăп хавассăн.

Саншăн эп хаклă пулсассăн ялан,
Саншăн ман чунăм усă пулсассăн,
Çыр пĕр çыру хăть, çырччĕ салам,—
Эп чунăмпа ăна вулăп хавассăн.

Тен эс юратрăн чăнах урăхне,
Тен вăл: чунăмçăм,—терĕ те пулĕ.
Эп ним тумасăр калап хамăнне:
Çыр юлашки хăть, чĕрем çаплах юлĕ.

Тен эс куратăн ăна ир те каç,
Аллине чăмăртатăн пуль, тусăм.
Ĕмĕр пĕрле пурăнмашкăн пулса,
Тен унпа сăмах татнă эс, чунăм.

Саншăн эп çывăх пулсаччĕ ялан.
Саншăн эп хаклă пулнă пулсассăн,
Çыр пĕр çыру хăть, çырччĕ салам,
Эп çавах: чунăм,—теп, вуласассăн.

1939 ç.



## ПӐРТРЕН ТУХРӖ ТЕ ЧИПЕР ХӖР...

Пӳртрен тухрӗ те чипер хӗр
Икӗ симӗс витрепе,
Атӑлти шур акӑш евӗр
Ярӑнайрӗ ерипен.
Хӗре хирӗç пулчӗ каччӑ,—
Письмоносец вӑл кунта,—
Сар конвертлӑ çыру пачӗ,
Ун çине пӑхса, кулса.
Ӑна çырнӑ çарти Сантӑр—
Хӗр юратнӑ савнӑ чун.
Çыру çулӗ çывӑх мар-тӑр:
Çыру килнӗ пилӗк кун.
Хӗр илейрӗ çыруне те
Чикрӗ кӗрӗк кӑсйине:
—Чунран тав тӑвап сана,—тет,
Пачӗ ӑша аллине.

1937 ç.



## АСАИЛӲ

Куккук канмасӑр авӑтатчӗ
Сип-симӗс тумлӑ Йӑлӑмра.
Сан куҫусем теме сӑнатчӗҫ,
Тӑраттӑн эсӗ ман умра.
Сана савса сӑмах эп чӗнтӗм,
Паллашрӑм ҫывӑххӑн унчух.
Халь астӑван пуль, тусӑм, ӗнтӗ,
Анчах халь эсӗ кунта ҫук.
Шап-шурӑ, шурӑ парохочӗ,
Ока шывне ик еннелле
Сирсе, илемлӗн иртсе пычӗ,
Тухайрӗ Атӑл ҫинелле.
Пароход пек ҫулсем те шурӗҫ.
Вӑхӑт пырать, вӑхӑт иртет.
Ҫав кунсене манмастпӑр пурпӗр,
Тӗлпулусем юлаҫ пиртех.

1939 ҫ.



## ИР ПУЛАТЬ

Ир пулать, ҫӗкленчӗ шурӑмпуҫӗ.
Ҫӑлтӑрсем сайралчӗҫ паҫӑрах.
Кантӑк уҫрӑм, ҫилӗ вӗрчӗ уҫҫӑн;
Савнӑ шӑпчӑк юрлать пахчара.
Эп пӑхатӑп тулалла... инҫелӗх...
Ыраш уйӗ тухать ман ума;
Унӑн вӗҫсӗр хумсене виҫетӗп,
Ирхи сывлӑш лӑпкать чунӑма.
Темӗн ҫӳллӗш колхозӑн ырашӗ—
Уншӑн пӗтӗм чунӑм савӑнать.
Пуҫӑма ҫӗн шухӑшсем тулаҫҫӗ.
Ир пулать. Ҫыратӑп сӑввӑма.

1939 ҫ.



## САВӐП САНА

Каҫхи ҫилӗ, ирӗклӗн те уҫҫӑн,
Пӗр чӗнмесӗр йӑпшӑнса вӗрет.
Пӑх-ха эсӗ,
Савнӑ чунӑм Дуся:
Ҫӑлтӑрсем ҫунаҫҫӗ тӳпере.

Каҫӗ ырӑ, ҫурхи сывлӑш тутлӑ;
Шурӑ ҫӗмӗрт лӑпкать шӑршӑпа.
Ой, чӗремҫӗм хӗмленет-ҫке вутлӑн,
Хӗмленет-ҫке тулӑх пурнӑҫпа.

Савнӑ Дуся, юратсах калатӑп:
Чӗререх тытатӑп эп сана.
Ӗҫре ӗмӗр савӑнма пулатӑп,
Юратӑп сана яланах.

Астӑватӑп: эс те ака турӑн,
Пирӗнпех ӗҫлерӗн ӑмӑртса.

Янрататтӑн ҫӗнтерӳллӗ юрӑ,
Сассуна илемлӗн хумхатса.

Агроном хушнӑ пек сухалаттӑн,
Шӑйрӑксем юлмастчӗҫ сан хыҫра.
Юрласа ҫӗн сӑвӑ сӑвӑлаттӑн
Сар хӗвел кулнӑ чух тухӑҫра.

Ҫавӑн чух юратрӑм сана, Дуся,
Савса илтӗм пӗтӗм чӗрепе.
Урасем хаваслӑн ак утаҫҫӗ,—
Утма хатӗр вӗсем ҫӗрӗпех.

Эсӗ, чунӑм, вӑйлӑ тырӑ-пулшӑн,
Эсӗ, чунӑм, саван выльӑха;
Кӑтартуллӑ таса тикӗс ҫулшӑн
Сахал мар кӗрешрӗн яланах.

Сталинла тырпулшӑн ӗҫлекен эс,—
Пысӑк ӳсӗм ӑна памаллах.
Эсӗ, чунӑм, ӗҫрен шикленмен ҫын,—
Эпӗ те, юлташӑм, санпалах.

Аллуна хаваслӑн чӑмӑртам-и,
Ӗҫпе пиҫнӗ хурҫӑ аллуна?
Пурнӑҫ рулӗ пирте хамӑртах-вӗт,
Килӗштертӗм санӑн кӑмӑлна!

1936 ҫ.



## СĂПКА ЮРРИ

Шăппăн çитрĕ ăшă каçĕ,
Уйăх çутатать.
Йăвăçсем те хумханмаççĕ,
Çывăр эс, ачам!

Шăпчăксем пуçарчĕç юрă
Пирĕн пахчара.
Эс ӳсенçĕ ĕмĕр урăх,
Çывăр эс, ачам!

Çăлтăрсем сана пăхаççĕ
Кантăк витĕрех.
Куçусем сан хупăнаççĕ,
Çывăр эс, ачам!

Аçу пек эс пултăн сарă,
Куçусем кăвак.
Теттесем вăл илсе парĕ,
Çывăр эс, ачам!

Выляса, чупса эс кулăн,
Ирхине тăрсан.
Ӳссе ҫитĕн—летчик пулăн,
Ҫывăр эс, ачам!

Пирĕн пурнăҫ халь илемлĕ,
Асап ҫук кунта.
Эс ӳсетĕн чи телейлĕ,
Ҫывăр халь, ачам!

1938 ҫ.



## ТИНĔС ÇИНЧЕ

Кăвак Каспий, сана юратрăм,
Куçа илмесĕр тинкереп.
Эс кăмăла татах хăпартрăн,
Эс, тинĕс, çуттăн тĕлĕрен.

Эп сан çинче ик каç ирттертĕм,
Ик каç сăнарăм сан сăнна.
Шухăшсене инçе вĕçтертĕн,—
Хăвна курнишĕн асăнма.

Ах, тинĕс, тинĕс, сарлака эс,
Куçăм тулли умра выртан.
Сана пăхса мĕн чухлĕ сăвăç
Мĕн чухлĕ сăвă юхтарман.

Сана курса пур сăвăç чунĕ
Килленнĕ пулĕ тĕмсĕлсе.
Сан пек хăват илесшĕн çуннă,
Пур хĕн-хура çĕнсе, вĕсем.

Халь çитрĕ ĕмĕт, кĕтни çитрĕ,
Эпир санран та вăйлăрах.
Унтанпала нумай кун иртрĕ,—
Эс, тинĕс, пирĕн алăра.

Çавăнпала сана юратрăм,
Куçа илмесĕр тинкереп.
Эс кăмăла татах хăпартрăн,
Чĕрем çĕкленчĕ ирĕкре.

1937 ç.



## АТĂЛ ÇИНЧЕ

(ПОЭМА)

1

Шур тĕтре сирĕлет,
Хĕвел сарăлнăçемĕн.
Ав, пĕлĕт иртет, шупкалса, Атăл çийĕн.
Куккук авăтать Йăлăмра паçăрах.
Паром çынсене ку енне каçарать.

Çут Атăл юхать
Хумханмасăр, тӳлеккĕн.
Çут Атăл сăнне сăнаса, эпир иккĕн
Тăратпăр ем-ешĕл çыран хĕрринче,
Шур хурăн ӳкерне мĕлке тĕлĕнче.

Каяр ярăнмашкăн,
Ман кимĕ те хатĕр,—
Унта пĕр хут çеç ярăнман, тусăм, эпĕр.
Сахал-и, кăтра хумсене авăсса,
Çӳренĕччĕ эпир пĕрле ярăнса.

Унта манӑн купӑс
Мӑнаҫлӑн янранӑ,
Унта чунсене юрату савӑнтарнӑ.
Стенька Разин ҫинчен халӑх хывнӑ юрра
Шӑрантарнӑ пӗрле анатра та тура...

Ай-хай, акӑшсем
Пӗр-пӗрне хӑвалаҫҫӗ,
Ай-хай, акӑшсем Атӑл ҫийӗн выляҫҫӗ...
Пароход чашласа хӑпарать анатран,
Мӗн чухлӗ ҫын куҫӗ сӑнать ҫыранран.

Тӑратпӑр пӑхса:
Илӗртет пире Атӑл.
Ҫӗклет кӑмӑла, чӗрене ҫӗнӗ Атӑл.
Авал ун пулман паянхи ҫут илем,—
Ӗҫхалӑх унпа савӑнса килленмен.

Паян ун ҫине пӑхма
Савӑк, илемлӗ;
Паян ун ҫинче эс курмастӑн кичемлӗх.
Анчах астӑвам, иртнине астӑвам:
Кунта вӗри юн сахалах тӑкӑнман...

Ак пирӗн умра ларакан
Ватӑ хурӑн,—
Авал вӑл кунта хӗн-асап кӑна курнӑ.
Асап кӑна курнӑ ӗҫхалӑх кунта:
Шыв мар-ҫке,—куҫҫуль те юн юхнӑ кунта.

Пӗлетпӗр эпир:
Унчухне питӗ йӳнӗ

Пулса çакăнта пусмăрти этем юнĕ.
Пуян хуçасен пурлăхне сĕтĕрсе,
Сахал-и пĕтсе Атăлта бурлаксем!

Пăхсамччĕ ăна:
Атăл халь урăх сăнлă,
Хаваслă, таса, илĕртӳллĕ, тăванлă.
Каяр ярăнмашкăн, пире вăл чĕнет,
Пире илĕртет тӳлек хумлă инçет.

2

Халь кăна пароход
Тăвалла иртсе кайрĕ,
Ăсатайрĕ ăна кăмăлпа Шупашкарĕ.
Пароход курăнми пуличчен хĕрĕсем
Тăрса юлчĕç пăхса, тутăрсем вĕçтерсе.

Ярăнатпăр эпир,
Кĕсменсем пирĕн çирĕп.
Вăй-хала хăпартать савни пек çепĕç ирĕ.
Уçă çил лăпкаса ачашлать питсенчен,
Ярăнмашкăн аван кимĕпе хум çинче.

Пароход тăвалла
Иртсе кайрĕ хăюллăн.
Пароход хыçĕнче Атăл юлчĕ те хумлăн,—
Хумĕсем, ик енчи çырана çапăнса,
Чарăнаççĕ хуллен—нумайччен тăхтаса.

Çыранри хăвасем
Йĕркерен тайăлайнă,

Кăчкисем шыв çине тăкăнаççĕ нумайăн.
Хăвасен хушшинчи тĕрлĕрен кайăксен
Юррине итлесе çĕкленеç чĕресем.

Ма юрламăн кунта
Савăнса, çывăх тусăм,
Ма янрамĕ кунта шăранса купăс уççăн:
Пирĕн Атăл хитре, пирĕн Атăл—илем,
Пирĕн Атăлпала кашни çын киленет.

3

Ярăнап асилсе
Купецсен кĕтӳне эп,
Çĕршыва пусмарта тытнине асилетĕп.
Мĕнпур тăшмансем пĕр каварлă пулса,
Халăха хĕн кăтартнă, çĕлен пек пăвса.

Вĕсем шеллемен
Сăпкари ачана та,
Ашшĕнчен уйăрса амăшне хĕн кăтартнă.
Хĕрсем, яшсене çын ĕçне ăсатса,
Юлайнă яла, куççульпе макăрса.

Хресченсем выçăпа
Аптраса тухса кайнă,
Семьине тăлăха măянпа çеç хăварнă.
Асап-хурлăхпа имшерленнĕ çынсем,—
Сахал-и вĕсем, бурлакра пĕтнисем?!

Кĕрхи каççенче
Сулăсем хуллен шунă,

Сулӑсем ҫийӗнче ӳркенсе кӑвать ҫуннӑ.
Кӑвать умӗнче ларакан бурлаксем
Кичемлӗн юрланӑ, ялне асилсе.

Асилнӗ яла,
Семьине манаймасӑр.
Пурнӑҫа хурласан—чарӑнман макӑрмасӑр.
Мӗнпур чӗререн ҫилленсе пурнӑҫа,
Юрланӑ вӗсем ҫавӑнта ҫӗр каҫах.

Хӑш чух ҫавӑнтах
Кӑвать сӳннӗ сасартӑк,
Чӗрӗлмен вара вӑл темӗнле тӑрӑшсан та.
Ҫук, кӑвать мар—пӗри хупнӑ куҫне,
Телей тупаймасӑр ҫухатнӑ пуҫне.

Е тата тӳпери
Ҫутӑ ҫӑлтӑр кичемлӗн
Ҫухалнӑ сӳнсе, тӗпренсе такам пенӗн.
Ҫук, ҫӑлтӑр мар—пӗри сикнӗ шыва,
Асапран хӑтӑласшӑн пулса.

Хӑшсем ҫуннӑ ялан
Пӑлхавпа ҫӗнтересшӗн,
Пусмӑрта усракан тӑшмана пӗтересшӗн.
Анчах, пулӑшу никамран тупманран,
Ҫунма тивнӗ каллех вӗсене нушара.

Кашкӑрсем кашкӑра
Шӑршӑпа та пӗлеҫҫӗ,
Ҫӑхан ҫӑхана куҫӗнчен сӑхмасть, теҫҫӗ.

Пуян кулаксем, хуҫасем патшана
Чун пек юратса хисепленӗ ялан.

Ҫавӑнпа ҫапӑҫу-
Хирӗҫӳ-мӗн тухсассӑн,
Патша ҫарӗсем урнӑ йытӑ пек харӑссӑн
Вакласа пӗтерсе темӗнчул этеме,
Атӑла кӑшт кӑна ҫынсенчен пӗвемен.

4

Ман кимӗ шӑвать,
Тавалла хӑпаратпӑр,
Ҫут Атӑл сӑнне ытарми юрататпӑр.
Ҫыран хӗррипе ларакан хурӑнсен
Ҫилпеле силленеҫ ҫавраka ҫулҫисем.

Шӑпчӑк:—шӑппӑн ларма
Хӑнӑхман, тесшӗн пулӗ,—
Ав шӑхӑрать, шӑплӑха вӑратса, илӗртӳллӗн:
Мухтаса сӑвӑланӑн туйӑнать Атӑла.
Ах, аван-ҫке, аван паян ман кӑмӑла.

Кашни ҫын чӗринче
Йӑлкӑшан-юрату пек,
Ун юрри шӑранса яланах вырӑн тупӗ.
Эп туятӑп, пӗлеп, тусӑм, санӑн ӑшна
Питӗ-питӗ ҫемҫен вӑл кӗрет йӑпшӑнса.

Эп ишетӗп ҫаплах,
Ерипен шӑвать кимӗ,
Куҫӑмсем таврана асӑрхаҫҫӗ ман тимлӗн.

Кӗсменсем пӗр кӗрсе пӗр тухаҫҫӗ шывран,
Ункӑ пек хумӗсем саланаҫҫӗ хыҫра.

Уяв чух кӳлекен
Чи хитре пӗкӗ евӗр,
Асамат кӗперри, авӑнса пит чиперрӗн,
Атӑлтан шыв илсе тӑнӑ пек туйӑнать.
Тинкерсе пӑхнӑҫем халь пӑхатпӑр ӑна.

Ма юрламӑн кунта
Савӑнса, ҫывӑх тусӑм,
Ма янрамӗ кунта шӑранса купӑс уҫҫӑн?
Пирӗн Атӑл хитре, пирӗн Атӑл—илем,
Пирӗн Атӑлпала кашни ҫын килленет.

Юрласа пынӑҫем
Малаллах эп ишетӗп,
Атӑл тӑрӑх пӑхса, иртнине асилетӗп,—
Кӗрешӳ юррисем янрани халӑхра
Халь те манӑн тӑрать шавласа хӑлхара.

Ҫирӗм ҫул каялла
Ҫӗршыв ҫулӑмлӑн ҫунчӗ,
Пире вӑр-хурах шайкисем сырса илчӗҫ.
Хӗвелӗ тухатчӗ юн пек хӗрелсе,
Кӳлӗнсеччӗ юнпа ҫапӑҫу хирӗсем.

Унта вӗрентсе
Ертсе пычӗҫ ӑсталӑн
Мӗнпур ӗҫҫынне аслӑ Ленинпа Сталин.
Эпир, ҫапӑҫса кӗрешӳ вуттинче,
Нихӑҫан та чакман, тӑшманран шикленсе.

Эпир çăкăрпа
Сывлăша илессишĕн,
Эпир чăнлăхпа ирĕке илессишĕн,
Эпир шывсемпе хĕвеле илессишĕн,
Эпир çĕнĕ пурнăç тăвасшăн кĕрешнĕ.

Эпир çапăçса
Хулапа хирсенче,
Эпир çапăçса тӳпере, шыв çинче,
Эпир хăраман тупăран та хĕçрен,
Эпир хăраман пульăсем тивесрен.

Çунса тăчĕ нумай
Кĕрешӳн вĕри вучĕ.
Нумай тантăшсем вăрçăра пуçне хучĕç.
Анчах çапăçни çухалмарĕ ахаль,
Çавăнпа савăнса пурăнатпар та халь.

Хамăр панă вăя
Хамăр илтĕмĕр эпĕр.
Ялавне çĕклесе, пирĕн чаплă Октябрь –
Тав туса пурăнма ырлăхра ĕмĕрех—
Татах малалла утма хушрĕ пире.

5

Ахаль мар
Атăла юрататъ пирĕн халăх,—
Вăл илемлĕн юхать, хумĕсем ун вăй-халлă.
Октябрь хĕвелĕ, илемлĕн тухса,
Вылярĕ унпа, шевлине çутатса.

Текех бурлаксем
Хурланса юрлан юрă,
Сывлăшра çěкленсе, Атăл тăрăх юхмасть халь.
Пуян хуçасен пурлăхне сěтěрсе
Çÿремеççě сынсем, хăйсене çěмěрсе.

Вăхăтсем халь юхаç
Сисěнмесěр, хаваслăн.
Çěнě пурнăç пирте. Кашни халăх, тăванлăн
Пěр-пěрне юратса, пысăк утăм тăвать;
Кашни халăх тухать ěçпеле мухтава.

Ай, ишер малалла,
Ярăнар, савнă тусăм,—
Мěн çитмест чěрене, мěн пирки пуçа усăн?
Эпир çěнсе илнě çěр çинчи телее,
Эпир тупнă çунса илěртен хěвеле.

Телейпе хěвеле
Никама та пăмастпăр,
Телейпе хěвеле ирěн-каçăн сыхлатпăр.
Пирěн пур Хěрлě Çар,—вăйлă, хурçă тěрек,—
Вăл çěлен кěтÿне кěртес çук чикěрен.

Ай, ишер малалла,
Ярăнар, савнă тусăм,—
Мěн çитмест чěрене, мěн пирки пуçа усăн?
Атăл, Атăл юхать, чунăма илěртет.
Çÿлте киклатса кайăкхурě иртет.

6

Анлă Атăл таса,
Куçкĕски евĕр тăрă.
Эпĕ хам ятарса çул çӳрерĕм ун тăрăх.
Эпĕ хам Жигули тăвĕсем патĕнчен
Иртсе кайрăм кăвак Каспине çитиччен.

Аçтăрханăн каçне
Çывăрмасăр сăнарăм,
Çамрăк хĕр аллинче чечексем те суйларăм.
Кавказ тăвĕсен хыçĕпе хăпаран
Хĕвеле сăнаса, хĕре саврăм чунран.

Ун хура куçĕнче
Ăшă кăмăл шыраррăм,
Ун хура куçĕнче ăшă кăмăл эп тупрăм.
Вăл, мана юратса, çитме хушрĕ татах,
Çитме хушрĕ каллех сирень çурнă сада.

Юлашки сăмахра
Эп каларăм: „Манмастăп,
Чул çине симĕс курăк шăтсан та.
Симĕс курăк нихăçан чул çинче ӳсес çук,
Эп сана нихăçан асăмран ярас çук“.

Ун питне, ман пите
Вăштăр çилĕ лăпкарĕ.
Ун çӳхе тутинче юратувăн кăварĕ
Çунса тăчĕ унчух, эп чуптурăм ăна—
Хам çумра юрласа пыракан тусăма.

Савнă тусăм, юлташ,
Пит телейлĕ халь эпĕр.
Эпир çĕршыва сыхлама кашни хатĕр.
Нимĕнле вăр-хурах çĕмĕреймĕ пире,
Варалаймĕ юнпа пирĕн чаплă çĕре.

Таптанса çĕрес çук
Улăхри симĕс курăк
Тăшмансен урипе çĕршывра пирĕн урăх.
Çак чипер Атăлпа тăшмансем чўхенеймĕç,
Лашисем те унтан ĕмĕрне шыв ĕçеймĕç.

Ай-хăй, ярăнар,
Савăнар эпир, тусăм.
Атăл çилĕ вĕрет, Атăл çилĕ пит уçă.
Йăлăмран тутлă шăршă килет ерипен,
Эпир ярăнатпăр çыран хĕррипе.

Ма янрамĕ кунта шăранса купăс уççăн,
Ма юрламăн кунта савăнса,
Çывăх тусăм:
Пирĕн Атăл хитре,
Пирĕн Атăл илем,
Ун çинче пирĕн чун ялав пек
Çĕкленет.

1938 ç.

## ТУПМАЛЛИ


*Стр.*

Атте . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 5
Пирĕн герой . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 7
Кĕтетпĕр эпир . . . . . . . . . . . . . . . . . . 9
Пирĕн Джамбул . . . . . . . . . . . . . . . . . 11
Сывлăх сунатпăр . . . . . . . . . . . . . . . . 13
Çĕнĕ çул ячĕпе . . . . . . . . . . . . . . . . . 15
Эпир хатĕрех . . . . . . . . . . . . . . . . . . 17
Билет . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 20
Амăшĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 22
Сывлăм . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 25
Çамрăклăх сăвви . . . . . . . . . . . . . . . . 28
Пирĕн Май . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 31
Аслă, тӳрĕ урам . . . . . . . . . . . . . . . . 34
Октябрь тивлечĕ . . . . . . . . . . . . . . . . 36
Мучи калать . . . . . . . . . . . . . . . . . . 37
Эп пырап . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 40
Октябрь каччи . . . . . . . . . . . . . . . . . 42
Акара . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 45
Ксçени . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 52
Тантăша . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 56

Стр.


Саншăн эп çывăх пулсассăн ялан . . . . . . . 58
Пӳртрен тухрĕ те чипер хĕр . . . . . . . . . . . 59
Асаилӳ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 60
Ир пулать . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 61
Савап сана . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 62
Сăпка юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 64
Тинĕс çинче . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 66
Атăл çинче (поэма) . . . . . . . . . . . . . . . 68

Хакĕ / Цена 1 т. / р. 80 пус / коп.

ИВАН МАЛГАЙ

РОСА

На чувашском языке

Чувашгосиздат
Чебоксары ◆ 1939